Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

81 (8147) № * Юн кун, 2013 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ĕçлес текенсем малаллах пăхаççĕ



Иртнĕ шăмат кун, октябрĕн 26-мĕшĕнче, Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пирĕн районти Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕнче пулчĕ. Кăçал иккĕмĕш хут. Пĕрремĕш хут кунта вăл реконструкципе юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ хыççăн асăннă культура центрне хута яниpе çыхăннă церемоние хутшăннăччĕ. Ку хутĕнче те республика Пуçлăхĕн визичĕ ыт ахальтен мар – районти «Сеспель» предприяти 25 çул тултарнине шăпах Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕнче уявларĕç. Кунти мал туртăмлă ĕçченсене Михаил Васильевич та предприяти юбилейĕ ячĕпе саламласа хастар ĕçшĕн тав сăмахĕ калама кăмăл турĕ. Республикăшăн та, районшăн та асăннă предприяти пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Республика Пуçлăхĕ хăйĕн салам сăмахĕнче çавна палăртрĕ. «Сеспель» – умри йывăрлăхсене пăхмасăр тăнăç аталанакан, инновацисемпе анлă усă куракан, тĕнче шайне тухнă предприяти. Кунта туса кăларакан тĕнче стандартне тивĕçтерекен продукцие чикĕ леш енче те хаваспах туянаççĕ.

Пĕтĕм ăнăçу – коллективра, кунти производство хутшăнăвĕсене пĕлсе йĕркелесе пынинче. Кунта кашниех хăйĕн ĕçне пĕлет. Ĕçне кура ĕç укçи шайĕ те пĕлтерĕшлĕ. Вăл вара республикăри экономика отраслĕнчи вăтам виçерен 1,8 хут пысăкрах. Çулталăкне пĕр рабочи пуçне 3,3 млн. тенкĕлĕх, пĕтĕмĕшле 1 млрд. ытла тенкĕлĕх продукци туса кăлараççĕ.

Михаил Васильевич «Сеспель» предприяти ĕçченĕсене вĕсен çăмăл мар, çав вăхăтрах ответлă ĕçĕшĕн пысăк тав сăмахĕ каларĕ, тĕнче рынокĕнче малашне татах çирĕпрех позицисем çĕнсе илме сĕнчĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕпе «Сеспель» предприяти Чăваш Республикин Хисеп грамотине, предприятин тĕп конструкторĕ Владимир Елисеев тата пурлăхпа техника снабженийĕн пай пуçлăхĕ Николай Индубаев республика Пуçлăхĕн Тав çырăвне тивĕçрĕç. Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерствин Хисеп грамотине тивĕçнисем хушшинче «Сеспель» предприяти директорĕ Владимир Бакшаев, тимĕр сăрлакан Людмила Апроськина, производство маçтăрĕ Иван Архипов, Виталий Васильев электрогазосварщик, механосборка ĕçĕсен слесарĕ Сергей Шишкин, механика участокĕн маçтăрĕ Владимир Шолков.

Предприятин 25 çулхи çул-йĕрне унăн директорĕ Владимир Бакшаев сăнласа пачĕ. 1988 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕ – предприятин çуралнă кунĕ. Ун чухне вăл ВЛКСМ Чăваш обкомĕ çумĕнчи хуçалăх предприятийĕ шутланнă. Комсомол обкомĕн секретарĕн çумĕ пулса тăрăшакан Владимир Александрович предприяти умĕнче тăракан задача çăмăл пулманнине аван ăнланнă. Кунта пуçласа компьютерсем туса кăларассине йĕркелесе ямалла пулнă. Задачăна пурнăçлама пултарнă – 1989 çулта предприятире 1000 ытла компьютер туса кăларнă.

Утса тухнă çул тумхахсăр та тикĕс пулнă темелле мар. 1990-мĕш çулсенчи йывăр вăхăт «Сеспелĕн» пурăнаслăхне те çирĕппĕнех тĕрĕсленĕ. Çапла вара кунта 1998 çулта пĕрчĕллĕ тата шĕвĕ тиев турттармалли çурма прицепсем туса кăларассине йĕркелеме шутланă. Çĕнĕ ĕç, çĕнĕ производство, çĕнĕ кадрсем... Утăм хыççăн утăм – предприяти аталансах пынă. Çĕнĕ производство мелĕсене алла илнĕ, кадрсем хатĕрленĕ, ыттисен опычĕпе паллашнă. 1998 çулта çăнăх турттармалли çурма прицепсем, 1998 – 1999 çулсенче пĕрчĕллĕ тиев турттармалли малтанхи çурма прицепсем туса кăларма пуçланă, 2004 çулта Раççейре пĕрремĕш хут çурма прицепсем çине WABCO фирмăн электрон EBS тормоз системине вырнаçтарнă. 2009 çулта бензин тата битум турттармалли çурма прицепсем хатĕрлеме пуçланă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

**Сăн ӳкерчĕкре: республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев наградăсене тивĕçнисемпе.**

## Саккăрмĕш Аслă пуху

Октябрĕн 26-мĕшĕнче тĕп хулари К. Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕнче Чăваш наци конгресĕн саккăрмĕш Аслă пухăвĕ ĕçленĕ. Унта Раççейĕн 26 регионĕнчен тата чикĕ леш енчи пилĕк çĕр-шывран делегатсем килнĕ.

Кун йĕркине çак ыйтусене кĕртнĕ: ЧНК президенчĕн Геннадий Архиповăн сăмахĕ, ЧНК вице-президенчĕн Николай Угасловăн доклачĕ, ревизи комиссийĕн отчечĕ, суйлав ыйтăвĕсем.

ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов Аслă пуху ĕçне хутшăннă. Михаил Игнатьев хăйĕн сăмахĕнче наци ăс-хакăлне упраса хăварасси патшалăх политики пулнине палăртнă.

Аслă пуху Чăваш наци конгресĕн президентне Николай Угаслова суйланă.

Аслă пуху ĕçне Муркаш районĕнчен суйланнă делегатсем те хутшăннă.

**Пĕрлехи право сехечĕ**

## Юридици пулăшăвĕ – тӳлевсĕр

Октябрĕн 31-мĕшĕнче республика хулисемпе районĕсенче Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕн Чăваш регион уйрăмĕн муниципалитет библиотекисенчи консультаци пункчĕсенче пĕрлехи право сехечĕ иртет. Унăн теми – «Граждансене юридици пулăшăвĕпе тӳлевсĕр тивĕçтерессин ыйтăвĕсем».

Мероприятие Чăваш Республикин Прокуратурин, ЧР Юстици министерствин, Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин Чăваш Республикинчи управленийĕн, Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Чăваш Республикинчи йышăну уйрăмĕн, çавăн пекех Пĕтĕм Раççейри «Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕ» обществăлла организацин Чăваш регион уйрăмĕн, Чăваш Республикинчи Адвокатсен палатин, республика нотариат палатин тата Чăваш Республикин наци библиотекин представителĕсем хутшăнаççĕ.

Сăмах май. Çав кун Муркаш районĕнче пĕрлехи право сехечĕ Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра иртет. Унăн адресĕ: Муркаш, Хĕрлĕ лапам, 5-мĕш çурт. Йышăну 15 сехетре пуçланать. Асăннă мероприятие район прокуратурин, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пĕрлешĕвĕн ответлă ĕçченĕсем хутшăнаççĕ.

**Пенси фондĕнче**

## Программăра – 1989 çын

Патшалăх пулас пенсисене хушса финанслассин программи пилĕк çула пычĕ. Çак тапхăрта асăннă программăна хутшăнма кăмăл тунисем районта 1989 çын пулчĕ. Чăваш Республикинче кун пеккисем 203 пин çын, Раççейĕпе пĕтĕмпе 15,8 млн. çын ытла.

Республикăра заявленисенчен ытларахăшне (146,7 пин) патшалăх тытăмне кĕмен пенси фончĕсем урлă йышăннă. 59 пин ытла заявлени Раççей Пенси фончĕн хуласемпе районсенчи территори управленийĕсем йышăннă. Ĕçленĕ вырăнта заявлени паракансем 6,4 пин ытла çын пулнă. Патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕ урлă 375 заявлени йышăннă. Программăна кĕмелли юлашки уйăхра – сентябрь уйăхĕнче – заявленисем уйрăмах нумай йышăннă: 31,6 пин е пĕтĕм заявленисен 15 проценчĕ чухлĕ.

Программăна хутшăнакансенчен ытларахăшĕ 40 çула çитмен çамрăксем – 63 процент. 40 – 60 çултисем 27 процент, 60 çултан аслăраххисем 10 процента яхăн.

Программа гражданин пĕрремĕш взнос хывнăранпа 10 çул хушши пырать. 2009 çултан тытăнса Чăваш Республикинче программăна хутшăнакансем хăйсен пулас пенси виçине ӳстерме взноссем 525 млн. тенкĕ тӳленĕ. Тӳлев вăтам шутпа 6800 тенкĕпе танлашать.

Программа условийĕсемпе взноссене уйăхсерен те, пĕр харăссăн та тӳлеме пулать. Тӳлев суммине ĕçлекен çын бухгалтерийĕ урлă та, çавăн пекех банк карттипе те, банкоматсемпе тӳлев терминалĕсенче укçан та тӳлеме май пур.

Программа участникĕсем пухăннă пенсие ватлăха пула ĕç пенсийĕ е вăхăт тухмасăрах пенси пама пуçăнсан та илме пултараççĕ. 2012 çулта пухăннă пенсие тӳлеме тытăннă та ĕнтĕ. Заявительсенчен ытларахăшне пухăннă пенсие пĕр харăссăн тӳлесе татнă. Мĕншĕн тесен уйăхсерен тӳлемелли виçе пенсин пĕтĕмĕшле калăпăшĕн 5 процентĕнчен нумайрах пулман.

**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

**Патшалăх услугисем**

## Электрон мелĕ вăй илет

Чăваш Енре патшалăхăн тата муниципалитетăн граждансене кирлĕ 32 услугине пурне те 5-мĕш тапхăра куçарса пĕтернĕ. Вĕсемпе тивĕçтернĕ чухне хут çинчи документсем те кирлĕ мар, çынсен хăйсен те вырăна тухса çӳремелле мар. Услугăпа пĕтĕмпех электрон мелпе тивĕçтерĕç.

Акă килтен тухмасăрах патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕпе усă курса ачана ача садне вырнаçтарма черете тăратма май пур. Ашшĕ-амăшĕн малтан сайтра регистрациленмелле те активаци кодне илмелле (почтăра е «Ростелеком» акционерсен усă обществин Чăваш Республикинчи тĕп офисĕнче). Кайран «Личный кабинетра» заявлени формине тултармалла та ун çумне кирлĕ документсен сканĕсене пĕрлештермелле (ача çурални çинчен панă свидетельство, ашшĕ-амăшĕн паспорчĕ). Сирĕн ачана черете тăратни тата вăл черетре миçемĕш пулни пирки пĕлтерни электрон почти çине пырĕ е телефон çине SMS ярса пĕлтерĕç (эсир хăш меле суйласа илнине кура).

Çавна палăртса хăвармалла. Чăваш Енре пурăнакансем патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕнче электрон мелпе патшалăхăн регион тата муниципалитет услугисене пурĕ 69 таран илме пултараççĕ. Федерацин 210-мĕш номерлĕ «Об организации предоставления государственных и муниципальных услуг» саккунĕпе килĕшӳллĕн услугăсене 1 – 4-мĕш тапхăра куçарасси 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне, 5-мĕш тапхăра куçарасси 2014 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçленмелле пулнă. Чăваш Енре палăртнă ĕçсем вăхăтра пурнăçланаççĕ.

**СĂМАХ МАЙ. Районта патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен центр иртнĕ çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă. Халĕ кунта «пĕр чӳрече» мелĕпе 35 услугăпа тивĕçтереççĕ. Кунсăр пуçне патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерессине районти ялсенчи 15 библиотекăра йĕркеленĕ. Хальхи вăхăтра вĕсенче муниципалитетăн 25 тĕрлĕ услугине парассипе документсем йышăнаççĕ тата хатĕрлесе параççĕ. Вĕсенчех тĕрлĕ ыйтупа консультаци те илме пулать. Мăн Сĕнтĕр, Шетмĕпуç, Кашмаш, Чуманкасси библиотекисенче çак ĕçе япăх мар йĕркеленĕ. Нумай функциллĕ центр пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлесси пирки федерацин территори тата регион влаç органĕсемпе 8 килĕшӳ тунă. Центрăн ятарлă сайчĕ пур.**

**Пенсисем**

## Уяв кунĕсемшĕн – маларах

Почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсенче ноябрĕн 3 – 4-мĕшĕсенче илмелли пенсие ноябрĕн 1 – 2-мĕшĕсенче параççĕ. Ноябрĕн 5-мĕшĕнчен тытăнса – унчченхи йĕркепех.

Раççей Перекет банкĕ ноябрĕн 3 – 7-мĕшĕсенче куçарса памалли пенсие счетсем çине ноябрĕн 1 – 2-мĕшĕсенче куçарса парĕ.

Ытти банксенче пенси тӳлевĕн вăхăчĕ уйăхăн иккĕмĕш вунă кунлăхне тивет. Çавна май пенси тӳлессипе графикра улшăнусем пулмаççĕ.

# Никам та пушшăн каймарĕ

**Ял хуçалăх продукцийĕн ярмăрккинчен**



**Таса какай кĕрхи кĕреке çимĕçĕ тесе шутлать хăйĕн хушма хуçалăхĕнчен сысна ашĕ илсе тухнă А. Лукин.**

Кăçал йĕпе-сапаллă кĕр кунĕсем тăчĕç пулин те, ĕçрен хăраман хресчен çут çанталăк кăларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнтерсех вырмапа ытти кĕрхи ĕçсене май пур чухлĕ вĕçлесе кĕрхи ярмăрккăна тухрĕ. Районта кĕр мăнтăрĕпе пĕр кĕрекере савăнасси йăлара. Кăçал та Муркаш ен хресченĕсем ăна кун йĕркинчен кăлармарĕç. Район центрĕнче тырă-пулăпа, çĕр улмипе, тĕрлĕ пахча çимĕçпе, улма-çырлапа тата аш-какайпа суту-илӳ тума йĕркеленĕ ярмăркка иртнĕ эрне кун, юпа уйăхĕн 25-мĕшĕнче, автовокзал умĕнчи лапамра иртрĕ. «Ĕçрен ан хăра – вăл хăй санран хăратăр», – вĕрентеççĕ аслисем. Кашниех ачаран пĕлекен çак ваттисен сăмахĕ кăçал районти çĕр ĕçченĕ тĕлĕшпех пулчĕ. Ĕçне пĕлекен хресчен кăçалхи кĕркунне уяр кунсен кашни саманчĕпе туллин усă курса пит хĕретмелле мар тухăç туса илчĕ, ăна вăхăтра пуçтарса кĕртсе кĕлете упрама хума та ĕлкĕрчĕ.

Малта пыракан çĕнĕ технологисемпе анлăн усă курса тĕш-тырăпа пăрçа йышши культурăсене, çĕр улмипе пахча çимĕçе, тымар çимĕçе тухăçлă туса илнĕ хресчен ял хуçалăх продукцийĕн ярмăрккине те тулли кăмăлпа тухрĕ. Çавăнпа хушăран пĕрĕхкелесе иртнĕ кĕрхи çумăр та хĕле хатĕрленекен ял çыннине ярмăрккăран сивĕтеймерĕ. Кунта пухăннисем пирĕн хресчен те умри çĕнĕ чиксене палăртса ĕçленине курса ĕненчĕ. Хĕл кунне хатĕрленекенсем килĕшӳллĕ хаксемпе таса та тирпейлĕ продукци ытлă-çитлĕ туянма та пултарчĕç.

– Кашни сутуçăн продукцийĕ – унăн хăйĕн килти хушма хуçалăхĕнче е хресчен (фермер) хуçалăхĕнче туса илнĕскер. Кун пирки паянхи ярмăрккăра никамăн та пĕр иккĕленӳ те çук. Çанталăк условийĕсене пăхмасăрах кашниех маттур ĕçленĕ. Çавăнпа та паян вĕсен питĕнче тулли савăнăç палăрать. Савăнччăр та кӳршĕсен ĕçĕсемпе ăнăçăвĕсене пăхса çĕнĕ тĕллевсем палăртчăр. Хресчен тăрăшулăхĕ çанталăк условийĕсене çĕнтернине кăçал аванах куратпăр. Апла пулсан пирĕн малашлăх пур, – пĕр çăвартан пупленĕ пек кăмăллăн калаçаççĕ Харитинăпа Иван Тимофеевсем. Туслă мăшăр уява килти хушма хуçалăхра туса илнĕ паха пылпа тухнă. Вĕлле хурчĕн продукцине сутма кăларса лартнă вĕсен сĕтелĕ патĕнчен çак кун çын татăлмарĕ. Ĕçчен мăшăрăн сĕнĕвĕсем те чылайăшĕшĕн хăйне евĕр уяв парни пулчĕç.

– Çанталăк çу кунĕсенче илемлĕ тăчĕ çав. Паян ярмăрккăна тухнă утарçăсем çав меллĕ вăхăтпа туллин усă курса юлни ытлашши сăмахсăрах куç умĕнче. Вĕсен продукцийĕн пахалăхĕ пысăккинчен те тĕлĕнместĕп. Çавăнпа Иван Тимофеев утарçăн пылне туянтăм та, – терĕ ятне-хушаматне кăтартма ыйтман асанне савăнăçне пытармасăр.

Агропромышленность комплексĕнче хастар та маттур, çĕр ĕçне чунĕпе парăннă пиншер çын вăй хуни района тивĕçлĕ шайра аталанса пыма пулăшать. Çак сăмахсене Мăн Хураçкари Александр Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ пирки те каламалла. Купăста тата вăрлăх çĕр улми сутма илсе тухнă автомашина умĕнче фермерăн мăшăрĕ Людмила Виссарионовна хыпаланатчĕ кăна.

– Хресченĕн професси уявне кăçал эпир япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илтĕмĕр. Кăçалхи уй-хир ĕçĕсем наука çитĕнĕвĕсемпе пĕлсе усă куракан, ял хуçалăх техникине тăтăш çĕнетсе агротехника ыйтăвĕсене пăхăнса ĕçлекен, çĕр пахалăхне çулсерен хăпартса пыракан, пысăк репродукциллĕ çĕнĕ сортсемпе усă куракан хуçалăхсем çанталăкăн кирек епле условийĕсенче те пысăк тухăç илме пултарнине кăтартрĕç. Ку вăл çапла пулмалла та. Паян вара хамăр ĕçĕн пахалăхĕпе халăх умне тухма та меллĕ, – терĕ тавар туянакансене миххи-миххипе купăста сутакан хĕрарăм хресчен (фермер) хуçалăхĕнче кăçал 10 гектар купăста ӳстернине палăртса.

Ял хуçалăх продукцийĕн ярмăрккине пынисен çак кун пĕр вырăнта тăма майĕ те пулмарĕ.



**Савăнăçпа тулнă Андрей Пайковшăн тулли михĕсем те паян çăмăлрах: çу каçа вăй хуни харама кайман вĕт.**

Çакăн сăлтавĕ – ял продукцийĕн анлă суту-илĕвĕ. Халĕ каланине çирĕплетсе ял хуçалăх продукцийĕпе сутă тăвакан ретре вара халăх явăçать кăна. Ăнланмалла, йӳнĕрех хакпа хĕл валли пахча çимĕçпе улма-çырла ытлă-çитлĕ туянса юлни никамшăн та ытлашши мар.

– Купăста тултарнă тулли сеткăсене çамрăкраххисем тата вăй питтисем хăйсемех йăтса каяççĕ-ха, анчах туянас шутлисем хушшинче ялсенчен килнĕ аслă ăрури хĕрарăмсем те пур. Вĕсене вара тулли михĕсене хăйсем техника таврашне кĕтме суйласа илнĕ вырăна хамах йăтса паратăп. Çакă та пирĕн тавара туянаканшăн меллĕ пултăр. Çынсем пахча çимĕç нумай туянни пирĕн ĕç харама кайманнине çирĕплетет, – терĕ тараса çинчен черетлĕ миххе хулпуççи çине çавăрса хунă май Андрей Пайков. Килти хушма хуçалăхри 8 сотка çĕр çинче технологие пăхăнса ӳстернине кура пахчаçă тăваттăмĕш çул ĕнтĕ купăста тухăçлă туса илет. Кăçалхи тухăç та 10 тоннăпа танлашнă. Ĕçлемесĕр пулмасть паллах çакă. Ăна Андрей Федорович та пытармасть. Ытлашши пахча çимĕçпе вара ялanах ярмăрккăра вăл. Кăçалхи сутăва та мăшăрĕпе Еленăпа тухнă. Суту-илӳ кал-кал пынишĕн иккĕшĕ те кăмăллă вĕсем. «Çур акирен пуçласа çу каçа вăй хунин пĕтĕмлетĕвне куратпăр паян. Вăл вара çитес çулхи ĕмĕтсене уçать», – пĕр-пĕрин çине кăмăллăн пăхса илсе пуплерĕ ĕçчен мăшăр.

Муркашра пурăнакан Андрей Лукин вара ярмăрккăна килти хуçма хуçалăхра туса илнĕ сысна какайĕпе тухнă. Типтерлĕ хатĕрленĕ какай патĕнчен те çынсем татăлмастчĕç. Пĕр мăшăр пулчĕ пулас, купăста тиенĕ пĕчĕк урапа çине сыснан çур тушкине хăпартса хучĕ. «Какайĕ илемлĕ, салăллах та мар. Çавăнпа май килнĕ чух çур сыснинех туянас терĕмĕр-ха», – терĕ арăмĕ хăйсен пĕрлехи шухăшне палăртса.

Андрей Вячеславович уява килти хушма хуçалăхран илсе тухнă сысна какайĕ хуçасăр нумай выртмарĕ.

– Тулăх тăрантарнине курах ĕнтĕ ашĕ те паха пулчĕ. Çакна сисрĕç пулас уява килнисем – самантрах туянса пĕтерчĕç, – тет суту-илӳ ăнăçлă пулнишĕн савăнăçне пытармасăр кил хуçи.

Çав вăхăтра Оринин ял тăрăхĕнчи Çĕньял Орининта пурăнакан Герман Котельников автомашина çумне вырнаçтарнă сĕтел çине банка хыççăн банка пыл кăларса лартрĕ. Ярмăрккăна черетлĕ сутуçă çитнине асăрхаса тавар туянакансем часах ун таврра сырăнчĕç. Кашниех уяв ячĕпе тесе пыл туянма тăрăшрĕ. Кĕске вăхăтрах пыл банкисенчен чылайăшĕ хуçине тупрĕ.

– Пасар пĕрле те, телей уйрăм теççĕ. Эсĕ кай, эпĕ хам валли çитес çул акма тесе пилĕк-ултă килограмм та пулин нумай çул ӳсекен курăк вăрлăхĕ туянам-ха, – тесе ман умри хĕрарăм тусĕнчен уйрăлса Ольга Егорова суту-илӳ тăвакан вырăналла утрĕ. Кăсăкланса эпĕ те Ольга Константиновна суту-илӳ тунă çĕрелле пăрăнтăм. Чăнах та темĕн те пур иккен кунта: нумай çул ӳсекен тĕрлĕ курăк вăрри, ыхра, клюква, хур ашĕ т. ыт. те.

Сутуçă Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинчен. Тăрăшуллă хĕрарăм мăшăрĕ пулăшнипе хресчен (фермер) хуçалăхне аталантарса пырать.

– Мăшăрăм Юрий пулăшнипе пĕрлех ачасем те пирĕн ĕçрен пăрăнмаççĕ. Çапла аталантаратпăр та çемье бизнесне. Ачасем килте чăх-чĕп, хур-кăвакал пăхаççĕ, пахчара ĕçлеççĕ. Пĕрлехи вăйпа хамăр тăрăхра пысăк тухăç пама пултаракан перспективлă сортсемпе, ăратăсемпе ĕçлетпĕр. Вăй хунине кура – тухăçĕ, – кăмăллă калаçать хресчен (фермер) хуçалăхĕн ертӳçи О. Егорова хăйсем илсе тухнă продукцие кăтартнă май.

Кам çĕр улмипе, кам пахча çимĕçпе, кам аш-какайпа хăй ăсталăхне кăтартрĕ уява пынисене. Уяв тĕрлĕ енлĕ иртрĕ пулсан та тĕллевĕ те, пĕтĕмлетĕвĕ те пĕрре пулчĕ: «Ĕç çынна тăрантарать. Тухăç пысăкрах пулсан экономика та тĕреклене́т, шухăш-тĕллевсем те пуянрах пулаççĕ».

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Объявления

**Продаем полиэтиленовые трубы диаметром от 20 до 1200 и фасонные изделия. Тел.: 8-927-860-43-22. 5-5.**

* * *

**СРОЧНО! Продается двухкомнатная квартира, 48 кв. м., ул. 50 лет Октября, д. 10. Тел.: 8-905-344-76-36.**

* * *

**Февральте пĕрремĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă ĕне сутатпăр. Отаркка ялĕ. Тел.: 8-927-860-15-55. 1-2.**

* * *

**Бурение колодцев, технологических отверстий. Колодезные кольца. Тел.: 8-927-668-96-96. 5-10.**

* * *

**«Натяжные потолки 21» от производителя. Срок изготовления – 2 дня. Каждый 4-й потолок – в подарок. Кредит, рассрочка, замер – бесплатно.**
**Тел.: 8-919-669-16-66. 7-10.**

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру по ул. Парковая, 5А. Тел.: 8-927-844-31-72. 1-2.**

* * *

**Март уйăхĕнче иккĕмĕш хут пăруламалли хура ĕне тата çулталăкри тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-857-96-30. 1-2.**

* * *

**Продаю автомобиль ВАЗ-2106 1997 года выпуска. Цена 36000 руб, торг. Тел.: 8-937-371-28-09. Куплю автомашину ВАЗ-2109-2112 с 2000 г. по 2009 г. в. Тел.: 8-937-010-80-04. 1-2.**

* * *

**Продаю сухие березовые дрова с доставкой на дом. Цена договорная. Тел.: 8-937-376-28-64.**

* * *

**Икĕ çулхи шурă тĕслĕ качака таки сутатăп.**
**Тел.: 8-927-849-51-18.**

* * *

**Çурлатри ялĕнче пурăнмалли çурт ытти хуралтăсемпе сутатпăр. Тел.: 8-927-845-40-08.**

* * *

**Продаю на запчасти автомашину ВАЗ-21099 2001 года выпуска, инжектор. Тел.: 8-903-065-48-78.**

* * *

**Ремонт стиральных машин. Гарантия. Качественно и быстро. Тел.: 38-58-45, 8-927-668-58-45, 8-927-842-07-05.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче виççĕмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Ярославка ялĕ. Тел.: 8-903-389-91-21.**

* * *

**На территории рынка с. Большой Сундырь работает шерсточесальный цех с 7–00 час. Тел.: 8-927-669-88-69. Нина.**

* * *

**Дорогие жители района! Идет распродажа, приуроченная к празднику урожая. Цены низкие: ячмень – 8 руб., пшеница – 8,5 руб., рожь – 6 руб. Цены действуют в течение недели. Тел.: 8-987-760-57-71. 1-2.**

* * *

**Требуются для работы в д. Москакасы менеджер по продаже профнастила и металлочерепицы. Зарплата 15 тыс. руб. в месяц. Также требуются охранники для работы с 18-00 до 8-00 час. Обр. по тел.: 8(83541)66-3-84, 8-927-667-88-48, 8-927-667-22-32. 2-4.**

* * *

**Продаю «Фольцваген транспортер» 1998 года выпуска в TDI 1,9 (1+6), в хорошем состоянии. Зимняя и летняя резина, обогрев двигателя. 250 тыс. руб. Тел.: 8-906-380-78-82.**

* * *

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:061901:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Васильев Валерий Никифорович, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр-т Тракторостроителей, д. 29, кв. 50. Васильев Вячеслав Никифорович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Ижелькасинская, д. 145.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:061901:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Самушков Николай Леонидович, адрес: Россия, Республика Татарстан, г. Казань, ул. Сиб. тракт, д. 24/7, кв. 45. Манвелян Елена Леонидовна, адрес: Россия, Республика Татарстан, г. Казань, ул. Сиб. тракт, д. 24, кв. 55. Самушкова Зоя Федоровна, Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Сярмыськасы, ул. Мира, д. 36.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГОУЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемых земельных участков.

Заказчиком проекта межевания является: Данилова Валентина Якимовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, д. Ойкасы, ул. Социалистическая, д. 10.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Красновой Р.Н., номер квалификационного аттестата № 21-11-28 от 08.02.2011 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. Электронная почта: ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, территория землепользования ЗАО «Колос», земельный участок расаоложен южнее д. Кадикасы.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 37.

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:128, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы, для установки временных сооружений (амбара), площадью 70 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271201:1125, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Актай, ул.Октябрьская, для возведения хозяйственных построек, площадью 39 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271202:62, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Актай, ул.Октябрьская, для возведения хозяйственных построек, площадью 53 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1192, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:160303:370, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с.Моргауши, ул.Ленина, для временного размещения ремонтируемых автомашин, площадью 140 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:281001:768, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 424257 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:281001:769, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 1510911 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:281001:767, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 1466549 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 2-10.**

**МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ** 4-10.
**от производителя.
Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00.**

## Постановление

**Постановление главы администрации Кадикасинского сельского поселения**
**№ 158 от 23 октября 2013 года**

**О проведении публичных слушаний по проекту планировки территорий, между д. Карамалькасы и д. Яраккасы Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

В соответствии со статьей 46 Градостроительного кодекса Российской Федерации, Федеральным законом от 6 октября 2003 года № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», Уставом Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики п о с т а н о в л я ю:

1. Провести публичные слушания по проекту планировки территорий, между д. Карамалькасы и д. Яраккасы Кадикасинского сельского поселения (далее – публичные слушания) 02 декабря 2013 года в 13.00 часов в здании администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Кораккасы (проект планировки территорий, между д. Кораккасы и д. Яраккасы Кадикасинского сельского поселения прилагаются).

2. Председательствующим на публичных слушаниях назначаю себя.

3. Предложения и замечания по проекту планировки территорий, между д. Карамалькасы и д. Яраккасы Кадикасинского сельского поселения, направлять в администрацию Кадикасинского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Кораккасы.

4. Администрации Кадикасинского сельского поселения обеспечить опубликование протокола публичных слушаний и заключения о результатах публичных слушаний в средствах массовой информации.

5. Настоящее постановление опубликовать в средствах массовой информации и на официальном сайте администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

6. Контроль за настоящим постановлением оставляю за собой.

7. Настоящее постановление вступает в силу со дня его официального опубликования.

**Глава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**С 9 октября открылся шинный центр «ШИН СЕРВИС». Большой выбор шин, дисков, аккумуляторов и т. д., при покупке комплекта шин – монтаж бесплатно. Каждому клиенту при замене шин – подарок. Адрес: с. Моргауши,территория «Агропромснаба». Тел.: 8(962)598-65-48. 7-10.**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 3-10.**

**Вăкăрсем сутатăп, 50-60 кг. Тел.: 8-937-953-38-34.**

**ЖАЛЮЗИ НА ОКНА ВСЕХ ВИДОВ от производителя. Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00.** 4-10.







**Скорая Компьютерная Помощь – весь спектр компьютерных услуг, таких как создание и размещение сайтов, антивирусная защита, диагностика, установка и настройка windows и программ, восстановление данных, настройка интернета, настройка Wi-Fi, апгрейд, поиск и установка драйверов и т.д. и т.п. Конт. тел. 89379555135, Сайт: http://zdiman.ru**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 2-10.**

**Строительной организации требуются маляры, плиточники, гипсокартонщики. З/п высокая, проезд и проживание в съемной квартире за счет организации. Тел.: 8-961-345-33-74. 3-8.**

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 16-25.**




**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 6-10.**

**СКЛАД ДВЕРЕЙ: для отделки окон: сэндвич, отливы, подоконники внарезку. МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ. ОКНА. Адрес: д. Москакасы, ул. Московская, д. 54 «Б», здание «Автобан 86», 2 этаж. Тел.: 8-903-358-47-03. 4-5.**

**МАТРАСЫ ВСЕХ ВИДОВ. Прием заказов по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 16а. Тел.: 8-937-955-33-00.** 4-10.




**Производственный цех, с. Моргауши, ул. Гагарина, 16 а (здание котельной). Тел.: 62-1-20,8-917-662-71-64, 8-937-955-33-00.**

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 8-10.**

**Немецкие качественные пластиковые окна. Замер, доставка – бесплатно. СКИДКИ. Тел.: 8-927-844-78-11. 4-5.**

Отдел образования и молодежной политики администрации Моргаушского района и Моргаушская районная организация профсоюза работников народного образования и науки выражают глубокое соболезнование родным и близким по поводу безвременной кончины ветерана педагогического труда

**ЕРШОВА**
**Николая Филипповича,**

долгое время проработавшего директором и учителем математики и физики в Хорнойской основной школе.

Коллектив индивидуального предпринимателя Вязова А.Н. выражает глубокое соболезнование близким и родным в связи с тяжелой утратой – кончиной

**НИКИТИНА**
**Сергея Геннадьевича.**

Хорнуйĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта нумай çул физика учителĕнче, завучра, шкул ертӳçинче ĕçленĕ

**Николай Филиппович**
**ЕРШОВ**

чылай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки мăшăрĕпе, ачисемпе, тăванĕсемпе, ял-йышпа таранăн хурланни çинчен пĕлтерет. Унăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕрере яланлăхах асра юлĕ.

«Центр гигиены и эпидемиологии в ЧР–Чувашии в г. Новочебоксарске» ФБУЗ филиалĕн коллективĕ кунта нумай çул ĕçленĕ

**Меланья Федоровна**
**ИВАНОВА**

вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ

**Анастасия Порфирьевна**
**ЛЮБИМОВА**

пенсионерка, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | среда 30 октября | | | | четверг 31 октября | | | | пятница 1 ноября | | | | суббота 2 ноября | | | | воскресенье 3 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +10 | +9 | +10 | +10 | +8 | +7 | +7 | +7 | +4 | +3 | +6 | +7 | +6 | +5 | +6 | +6 | +6 | +7 | +7 | +6 |
| Давление мм | 742 | 743 | 744 | 745 | 745 | 743 | 741 | 742 | 746 | 748 | 749 | 747 | 747 | 747 | 747 | 746 | 746 | 746 | 747 | 748 |
| Влажность % | 77 | 81 | 67 | 74 | 79 | 90 | 89 | 86 | 76 | 72 | 73 | 84 | 83 | 86 | 75 | 83 | 85 | 92 | 86 | 88 |
| Ветер м/сек | 6 | 6 | 6 | 5 | 5 | 3 | 3 | 5 | 6 | 5 | 4 | 5 | 5 | 5 | 5 | 3 | 6 | 4 | 3 | 2 |
| | З | З | З | З | Ю-З | Ю-З | З | З | С-З | З | Ю-З | Ю-З | З | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 07:56 | 17:16 | | | 07:58 | 17:14 | | | 08:01 | 17:11 | | | 08:03 | 17:09 | | | 08:05 | 17:07 | |
| Луна восход / заход | | 02:35 | 15:31 | | | 03:48 | 15:49 | | | 05:03 | 16:09 | | | 06:21 | 16:32 | | | 07:41 | 16:59 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**

**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.**
**Пичете панă 29.10.2013 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4780.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.